Пирĕн пата çыраççĕ

# Чарăну та, павильон та çук

Район хаçачĕн редакцине Шомик тăрăхĕнчен коллективлă çыру килчĕ. Унта 132 çын алă пуснă. Апла пулсан вĕсем питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту хускатни пирки иккĕленӳ çук. Акă мĕн çыраççĕ вĕсем:

**«М–7 «Волга» Волжски автомобиль çулĕн пĕтĕм трассипех чарăну вырăнĕсенче автопавильонсен вырнаçтарса тухнă. Çул Шомик енне пăраннă çĕрте кăна кун пек павильон çук. Унта ял ячĕпе «Шомиково» паллă вырнаçтарнă та çакăнпа ĕç вĕçленнĕ. Çак паллă пекех эпир те кирек епле çанталăкра та уçă тӳпе айĕнче çула май каякан автомашина кĕтсе тăратпăр. Кунта кирек хăçан та автомашина айне лекме пулать. Автомобиль çулне тунă чухне чарăну вырăнне тата çуран çӳрекенсем валли çул урлă каçмалли майсене йĕркелеме маннă. Сылтăм енпе пырас пулсан, Шупашкар районĕнчи Станьял ялĕн чарăнăвне çити çитме тивет. Мĕн тума каймалла-ха пирĕн унта çити?**

**Кунта пурăнакансене чылайăшне Анат Кĕнер (Çӳлтикасси) чиркĕвĕнче ят хунă. Вĕсем çав чиркĕвех çӳреççĕ. Анчах та çула хупса хунă. Тепĕр енчех масар пур. Унта Шомикра пурăнакансене вилсен пытараççĕ. Çак масар çине те кайса килме май çук. Эпир пурте тулăх пурнăçпа пурăнатпăр тесе калаймăн, çуранах утма тивет. Тĕрĕссипе халăх валли лайăххах тăватпăр тетпĕр, анчах та пачах тепĕр майлă пулса тухать.**

**Эпир халĕ XXI ĕмĕрте, цивилизациллĕ çĕршывра пурăнатпăр. Чарăну вырăнĕсенче çутă тата ытти те кирлех.**

**Енчен те транспортпа район центрĕнчен пырас пулсан, тăван Шомик ялне лекес тесен Питтикасси чарăнăвне çитме лекет. Шупашкар районĕнчи ялсене лекме вара пушшех те кăткăс. Сахал мар километр хăвалама тивет. Мĕн-ха ку вăл, çакна мĕнле ăнланмалла?**

**Шомик ялĕнче пурăнакан е Шупашкар районĕн çыннин Шупашкара каяс тесен каллех кутăнла пулса тухать. Малтан Катькаса çул тытас пулать, хыççăн кăна Шупашкаралла çул уçă. Çапла вара бензинĕ те ытлашши çунать, укçи те тăкакланать, вăхăчĕ те иртет. Халăхра çапла калани пур: «Пурнăçа ансатлатмалла, кăткăслатмалла мар – ахалех кăткăс вăл». Ку вара тĕрĕс.**

**Татах пысăк пĕлтерĕшли пирки. Кун пеккине Турă ан хуштăр, анчах пушар тухас пулсан е теприне васкавлă пулăшу кирлĕ пулсан, пирĕн ялсене хăвăрт çитме май çук, тавра çаврăнса килес пулать. Çакă вăл çынсене кислород парассине чарса лартнă пекех.**

**Шомик тăрăхĕнче пурăнакансем сахал мар. Кунта сиплевпе сывлăх лагерĕсем çулталăк тăршшĕпех ĕçлеççĕ, çу кунĕсенче ачасен лагерĕсем уçăлаççĕ. Шомик ялĕ Шупашкар районне кĕрекен Атăльял, Хорнсор, Кипечкасси ялĕсене çывăх вырнаçнă. Шомикра пурăнакансен проблеми асăннă ялсенче пурăнакансене, нумай дача участокĕсен хуçисене те тӳррĕмĕнех пырса тивет.**

**Çулталăкĕпех Шомика лагерьсенче канакан ачисем патне ашшĕ-амăшĕсем пырса çӳреççĕ. Чарăну, çуран çӳрекенсем валли çул урлă каçмалли вырăн та, тата ытти те пулманни вĕсене те питĕ тарăхтарать. Пирĕн пата вара республикăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен кăна мар, ытти регионсенчен те килсе çӳреççĕ. Пирĕн хĕвеллĕ Чăваш Ен пирки вĕсем мĕн шутлама пултараççĕ-ха капла?**

**«Шомиково» чăрăнуран тытăнса «Березка» лагере çити тротуар кирлех. Çул çинче килти выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк кăна мар, çынсем те автомашина айне пулнă тĕслĕхсем сахал мар. Çул-йĕр паллисем çук. Автомашинăсем пысăк хăвăртлăхпа иртсе çӳреççĕ. Ку вăл – ял çыннисен ыйтăвĕ».**

Чăннипех те пысăк ыйту хускатаççĕ Шомик тăрăхĕнче пурăнакансем. Çавна май эпир пĕр тăхтаса тăмасăр район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçине Владимир Германович Никитинпа çыхăнтăмăр, асăннă ыйтăва уçăмлатса пама ыйтрăмăр.

Владимир Германович шухăшĕпе, чăннипех те тĕрĕс ыйту хускатаççĕ Шомик ялĕнче пурăнакансем. Кунти çул федераллă трасса шутланать. Ăна «Волга» çул-йĕр управленийĕ тунă, çул унăн балансĕ çинче тăрать. Асăннă çул юпленĕвĕн проектне район администрацийĕпе сӳтсе явнă чухне ăна Катькас патĕнчи пек икĕ шайлă тума пăхнă пулнă. Анчах та çул-йĕр управленийĕ проекта улăштарнă. Çул юпленĕвне икĕ шайлă йĕркелеме çывăхра выльăх масарĕ пулни чăрмантарать иккен. Чарăну вырăнĕнче павильон вырнаçтарасси, кунти вырăна тĕттĕм вăхăтра çутатса тăрасси те «Волга» çул-йĕр управленийĕнчен килет.

Çавна палăртса хăварасшăн. Пĕрле çыхăнса ĕçлесен çырупа тухакансен пысăк ыйтăвне татса пама май тупма пулатех.

Çар службине суйласа илекенсем валли

# «Манăн сержант пулас килет»

Çапла хуравларĕ мана Муркаш тата Элĕк районĕсен Çар комиссариачĕ умĕнче тăракан каччă. Калаçса кайрăмăр. Вăл çартан таврăннă ĕнтĕ, хамăн пĕлĕшĕм пулать.

Ашшĕпе 1974 çулта шăпах Украинăра сержантсем хатĕрлекен шкулта лайăх паллăсемпе вĕрентĕмĕр, сержантсем пулса тăтăмăр. Çар службине тĕрлĕ вырăнсенче тивĕçлипе вĕçлерĕмĕр.

Çак яшпа, А. Беловпа, вăл ăçта вĕренме кĕресси пирки калаçрăмăр. «Вĕреннĕ çын валли яланах çул уçă»,– терĕм.

Хальхи вăхăтра Раççей çарĕнче пысăк реформăсем пулса иртеççĕ. Нумай-нумай офицера запаса яраççĕ. Вĕсен вырăнне офицер должноçĕсемпе сержантсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Кăçалхи август–сентябрь уйăхĕсенче хамăртан инçех мар вырнаçнă Рязань хулинче сержантсем хатĕрлекен центр (ЦПС) ĕçлеме пуçларĕ. Эпĕ ку хулара 1975 çулта хам Совет Çарĕн ретĕнче пулнă чух командировкăра пулнăччĕ. Хули питĕ илемлĕ. Уйрăмах вара хула урамĕсемпе кăвак беретлă курсантсем утнине курсан. Ун чухне çак хулара Сывлăш-çар десант çарĕсем (ВДВ) валли офицерсем хатĕрлетчĕç.

Халĕ вара Рязань хулинче çар вĕрентĕвĕн виçĕ заведенийĕ вырнаçнă: Рязаньти Сывлăш-çар десант çарĕсен аслă команда училищи, çар автомобиль институчĕ тата çыхăнăвăн çар аслă команда училищи. Шăпах вĕсен бази çинче уçăлать те ĕнтĕ сержантсем хатĕрлекен центр (ЦПС).

Çак центрта икĕ çул ытларах вĕренсе яшсем сержантсем пулса тăраççĕ. Хыççăн вара вĕсене взводсем шанса параççĕ. Кăçал кăна Рязаньти центра 1700 çамрăк салтак вĕренме пуçлать. Ку центра вĕренме пыракансем авланнă пулсан, вĕсене мăшăрĕсемпе тата ачисемпе пĕрле пурăнма майсем туса параççĕ. Вĕренме кĕрес текенсен ыйтусем пулсан вĕсен Çар комиссариатне пырас пулать.

Манăн çавна та каласа хăварас килет. Рязаньти çар училищисене вĕренсе пĕтернĕ май пирĕн районтан кăна паян 50 ытла офицер çар ретĕнче тăрать. Çар тивĕçĕсене пурнăçласа тивĕçлĕ канăва тухнисем те пур. Вĕсен кăкăрĕсем çинче орденсемпе медальсем тата ытти значоксем ялкăшаççĕ. Пăхма та илемлĕ Рязаньти çар училищисене вĕренсе пĕтернĕ çынсен тумĕсем çине.

Халĕ ĕнтĕ сержантсем хатĕрлекен центр Раççей çарĕсем валли тĕрлĕ специалистсем кăларма пуçлать. Пур йышши çарсем валли те. Кам сержантсем хатĕрлекен центра вĕренме кайма шутлать, манăн вĕсене хăйсен ĕмĕрĕнче яланах ăнăçу сунас килет. Телейлĕ пулăр! Раççее, тăван кĕтесе сыхлăр!

**Б. ШУРНОВ,**
**запасри гварди аслă лейтенант.**

Вулакан пултарулăхĕ

## Атте

Ачалăха вĕçсе кайсассăн
Атте сăнарĕ ман умра.
Инкек-синкек сиксе
тухсассăн
Эс тăрăшаттăнччĕ чунран.

Эс ачусемшĕн питĕ çуннă,
Асран кайми тăван аттем,
Хура-шурне сахал-и курнă,
Çавăнпалах сан шур
çӳçсем.

Расна сан пурнăç çулĕ
пулчĕ:
Е çил-тăман, е çут хĕвел.
Хăш чух шăпа шӳтлерĕ,
кулчĕ,
Çапах тулли пулса сĕтел.

Эс ирхине мана вăратрăн:
«Кĕтеççĕ, каймалла»,–
тесе.
Инçе çула тухса ăсатрăн
Телейпе ырлăх пиллесе.

**Ю. КОВАЛЕВ.**

Хĕл кунĕсене хатĕрленсе

# Юсав ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ



Районта нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçсем туса ирттересси вĕçленсе пырать. Кăçалхи июнь–август уйăхĕсенче нумай хваттерлĕ çуртсене юсассипе республикăн адреслă программине кĕртнĕ ĕçсене пĕтĕмпех вĕçленнĕ. Çуртсен çийĕсене, путвалсене, электричество парса тăмалли системăсене капиталлă юсанă, пур çуртсен фасачĕсене те ăшă тытмалла туса юсанă.

Хальхи вăхăтра Мăн Сĕнтĕрти Новая урамри 34-мĕш çурт çинче капиталлă юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Ку объекта асăннă программăн хушма перечене кĕртнĕ. Пĕтĕмпе çуртсен çийĕсене 1050 тăваткал метр, 1 миллион та 3 пин те 390 тенкĕлĕх юсама палăртнă. Ку суммăпа программăн тĕп списокне кĕртнĕ объектсенче юсав ĕçĕсене туса ирттернĕ чухнехи перекете пула усă курма май килнĕ.

Халĕ тĕп ĕçсем вĕçленнĕ ĕнтĕ. Пĕтĕмĕшле октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне палăртнă ĕçсен 95 процентне пурнăçланă.

Юсавçă-строительсем, çанталăкăн меллĕ саманчĕпе усă курса, пуçланă ĕçсене вĕçлесе, туса ирттернĕ ĕçсен акчĕсене октябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне хатĕрлесе çитерес шухăшлă.

**Хамăр инф.**

Ыйту – хурав

# Сире ĕçрен саккунлах хăтарнă-и?

***Çынна ĕçрен хăтарни хăçан саккунлă мар шутланать-ха?***
**П. ГРИГОРЬЕВА.**

Тĕрĕссипе каласан, çынна хăйĕн ирĕкĕсĕрех е ытти сăлтавпа тата çирĕплетнĕ йĕркене пăсса ĕçрен хăтарни саккунлă мар пулса тăрать. Ытларах чухне ĕç паракансем çынна ĕçрен хăтарнă чухне саккун йĕркисене çапла майпа пăсаççĕ: саккунпа пăхман мелпе сăлтавласа ĕçрен хăтараççĕ; ĕçрен хăтарнине тĕрĕссипе пулман япалапа сăлтавлаççĕ; дисциплинăна е ĕç обязанноçĕсене сĕмсĕррĕн пăснине (прогул туни, ĕçре ӳсĕр пулни, хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни, вăрлани т. ыт. те) документпа çирĕплетмесĕрех ĕçрен хăтараççĕ.

Ĕлекенсен штутне чакарассин процедурине йĕркене пăхăнса туса ирттермесĕрех çынна ĕçрен кăларни, ятарлă аттестаци ирттермесĕрех тата медицина тĕрĕслевĕ ирттермесĕр çынна ĕç вырăнĕсĕр хăварни те саккуна пăсни пулать.

Ытларах чухне ĕç паракан çынна хăйĕн ирĕкĕпе ĕçрен хăтарать, хăйĕн ирĕкĕпе ĕç килĕшĕвне татасси пирки заявлени çырма хушать. Паллă ĕнтĕ, çынна чăннипех те дисциплинăна пăснăшăн ĕçрен хăтараççĕ пулсан, кун пирки ĕç кĕнекинче çырса хунине ĕненме пулать. Енчен те вара сире ĕçрен саккунпа килĕшсе тăман майпа хăтараççĕ пулсан, епле пулсан та ку варианта ан йышăнăр.

Обществăлла организацисенче

# Туслă пурăнатпăр

Ылтăн кĕркунне хăйĕн илемĕпе ватти-вĕттине те илĕртет. Пукрав кунĕ вара çуллахи кун пекех ăшă та хĕвеллĕ пулчĕ. Çак илемлĕ кун, хăнахнă йăлапа, куç япăх куракан инвалидсем районти тĕп библиотекăн вулав залне пуçтарăнчĕç. Çав кунхи пуху Çĕр ĕçченĕн çулталăкне халалласа иртрĕ. Уявăн тĕп сăнарĕ вара Социализмла Ĕç Геройĕ О.Ф. Федорова пулчĕ. Унăн пурнăç çулĕ, ĕçри çитĕнĕвĕсем пирки библиотекăн методисчĕ Э.П. Димитриева питĕ анлăн каласа пачĕ.

«Ыр кăмăллăх» клубăн черетлĕ ларăвĕ çавра сĕтел хушшинче иртрĕ. Сĕтел çинче вара мĕн тĕрлĕ кăна çимĕç-кучченеç çук пулĕ. Р. Мерлова, Г. Чернова, Е. Никитина Пукрав кунĕ валли чăвашсен чи юратнă çимĕçĕсене хатĕрленĕ. Шетмĕпуçĕнчи Н.И. Кудрявцева, Ятманти 80 çула çитнĕ В. Петров, Беляевсемпе В. Горланова, «Татьяна» ООО суту-илӳ çурчĕн ертӳçи Т. Григорьева та кучченеçсемсĕр килмен.

Куç курманнисен уйăхсеренех çапла пĕрле пухăнатпăр, пĕр-пĕрипе чуна уçса калаçатпăр. Вырăнти организаци малашнехи ĕçне-хĕлне палăртни питĕ кирлĕ. Çитес вăхăтрах Чăваш Республикинчи куç япăх куракан инвалидсем хушшинче шашка-шахматла выляссипе ăмăрту иртĕ. «Çĕнтерӳ салючĕ» фестивалĕн 3-мĕш тапхăрĕ Атăл тăрăхĕнчи регионсем хушшинче Хусан хулинче ноябрь уйăхĕнче иртмелле. Унта та пирĕн арçынсен ансамблĕ хутшăнма хатĕрленет.

Чӳк уйăхĕн 13-мĕшĕнче Куç курманнисен пĕтĕм тĕнчери кунне, раштавăн 3-мĕшĕнче Сусăр çынсен кунне халалласа алă ĕçĕсен выставкине йĕркелес терĕмĕр. Уявсене халалласа тĕрлĕрен реабилитаци мероприятийĕсем районта та, республикăра та иртĕç. Пирĕн куç япăх куракансен обществин членĕсем хăйсен чун пуянлăхĕпе, чир-чĕре парăнмасăр ытларах халăх хушшинче пулма тăрăшнипе палăрса тăраççĕ. Çавăнпа та сывă çынсем енчен вĕсем тĕлĕшпе ăш кăмăллăх, ăнланса пулăшу сĕнни вырăнлă пулĕ.

**Галина КИРИЛЛОВА.**
Муркаш ялĕ.

Конкурс

Администрация Моргаушского района приглашает принять участие в открытом конкурсе по определению официального печатного издания, осуществляющего публикацию информации о проведении конкурсов и аукционов на право заключения договоров, предусматривающих переход прав владения и (или) пользования в отношении имущества, находящегося в муниципальной собственности Моргаушского района Чувашской Республики (далее-открытый конкурс).

Сведения об условиях конкурса: 1. Начальная цена опубликования информации о проведении торгов на право заключения договора аренды имущества, являющегося муниципальной собственностью Моргаушского района Чувашской Республики – 12,0 рублей с учетом налога на добавленную стоимость за квадратный сантиметр.

2. Обязательная публикация информации на русском языке.

3. Периодичность выхода издания - не реже 2-х раз в неделю.

4. Распространение печатного издания на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Требования к участникам конкурса: к участию в конкурсе допускается редакция печатного издания средства массовой информации:

- зарегистрированного на момент подачи заявки в качестве средства массовой информации, что подтверждается свидетельством о регистрации;

- продолжительность деятельности которой в качестве редакции печатного средства массовой информации составляет на дату подачи заявки на участие в конкурсе не менее года;

- не имеющая убытков за финансовый год, предшествующий году подачи заявки;

- представившая организатору конкурса в установленные сроки документы, соответствующие требованиям и условиям, предусмотренным конкурсной документацией.

С конкурсной документацией можно ознакомиться по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, тел. 62-2-66, 62-5-99, каб. 313, а также на официальном сайте организатора конкурса со дня опубликования сообщения о проведении конкурса и размещения его на официальном сайте Моргаушского района в сети «Интернет» (http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71), контактное лицо по приему заявок: Колесникова Мария Николаевна.

Заявка на участие в конкурсе с (приложением описи в двух экземплярах) принимается в кабинете № 313 (отдел имущественных и земельных отношений) по адресу организатора конкурса со дня опубликования сообщения о проведении конкурса и размещения его на официальном сайте в сети «Интернет».

Окончательный срок представления заявок на участие в конкурсе - 17 ноября 2009 г., 17.00 час.

Конкурс состоится 19 ноября 2009 года в 9.00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб.306 (Бизнес-инкубатор).

Победителем конкурса признается участник конкурса, предложивший наименьшую цену, при выполнении всех требований по тиражу печатного издания, территории распространения издания и других требований, установленных конкурсной документацией.

Протокол о результатах проведения конкурса подписывается организатором конкурса и победителем конкурса в день проведения конкурса - 19 ноября 2009 года.